

# Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Елена Порфирьева

## Пурнăç çулĕпе çур ĕмĕр пĕрле

**Утă уйăхĕн пуçламăшĕнче Çемье тата юратупа шанчăклăх кунне халалланă уявра округри нумай çул пĕрле пурăнакан хисеплĕ мăшăрсене «Юратупа шанчăклăхшăн» медальпе чысларĕç. Пысăк наградăна тивĕçнисен шутĕнче Уйкас Кипекре пурăнакан Сергеевсен çемйи те пулчĕ.**



Геннадий Ефимовичпа Зоя Егоровна 50 çул пĕрле. Савăнăç-телейне те, йывăрлăхсене те çурмалла пайласа килĕштерсе пурăнаççĕ. 1975 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче вĕсем пĕрлешсе çирĕп те туслă çемье çавăрнă.

Пĕтĕм пурнăçĕ Сергеевсен тăван тăрăхпа çыхăннă. Геннадий Ефимович та, Зоя Егоровна та Уйкас Кипек ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çемье пуçĕ çар хĕсметне тăма ят тухиччен колхозра ĕçленĕ. Салтакран килсен те тăван хуçалăха таврăннă. Шоферта вăй хума пуçланă, колхоз председательне машинăпа турттарнă. Çураки, ĕççи тата тыр-пул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра ир пуçласа сĕм çĕрлеччен, канмалли кунсене пăхмасăрах, ертӳçĕпе пĕрле хуçалăхăн уй-хирĕсене, фермисене тухса çӳренĕ. 2000-мĕш çулсенче Геннадий Ефимовича инженер тивĕçĕсене шанса панă. Тата тепĕр икĕ çултан вара ĕçчен, яваплăхпа палăракан хастара «Маяк» ял хуçалăх кооперативĕн председательне суйланă. Çапла колхозникрен пуçласа хуçалăх ертӳçи таран «хăпарма» пултарнă Геннадий Ефимович.

Зоя Егоровна та вĕренсе пĕтерсенех «Звезда» колхозра ĕçлеме пуçланă. Кунта вăл 15 çул енне тӳрĕ кăмăлпа тимленĕ. 1989 çултан вара хăйĕн пурнăçне ача-пăчапа çыхăнтарнă, «Радуга» ача садĕнче воспитателе шăпăрлансене пăхсаасăрхаса тăма пулăшнă.

Хисеплĕ мăшăр пĕр ывăлпа тăватă хĕре кун çути парнелесе, тивĕçлĕ воспитани парса пурнăç çулĕ çине тăратнă. 1990 çулта Зоя Егоровнана Ача амăшĕн мухтавĕн медалĕпе (2 степень) наградăланă. Халĕ Сергеевсене çичĕ мăнукĕ савăнтараççĕ. Вĕсем килсен кил-çурт ача-пăчан хаваслă сассипе тулать. Çакă мар-и чăн-чăн телей?

Тивĕçлĕ канура пулин те, пĕр кун та ал усса лармаççĕ Сергеевсем. Çирĕп хуçалăх тытаççĕ, çулла сад-пахчара вăй хураççĕ. Хăйсен ĕçченлĕхĕпе çывăх çыннисене ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Ялйышра та ырă ят-сумра. Ĕмĕр сукмакĕ çинчи йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерсе, алла-аллăн тытăнса, пĕр-пĕриншĕн тата ачисемпе мăнукĕсемшĕн çирĕп тĕрев пулса, çемье хаклăхĕсене упраса туслă пурăнаççĕ Зоя Егоровнапа Геннадий Ефимович.

**Оксана СЕМЕНОВА**

## Ял старости яваплă, шанчăклă

**Аслă ăрури маттур çынсенчен пĕри вăл – Кӳлхĕрринчи Владимир Ржанов. Вăл хисеплĕ, сумлă çын. Чылай çул – ял старости. Тăван тăрăхшăн, унăн хăтлăлăхĕшĕн, тирпей-илемĕшĕн ырми-канми тăрăшать. Халăх шанăçне тӳрре кăларассине мала хурать. Тăван яла чунтан юратать. Субботниксене, ял уявĕсене тата ытти пĕлтерĕшлĕ мероприятие йĕркелет. Унăн ĕçхĕлĕпе ял çыннисем питĕ кăмăллă. Пуçаруллă та хастар ял старости çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Çамрăкпа çамрăк пек, ватăпа ватă пек калаçать.**



В.Ржанов тутлă шӳрпепе сăйларĕ.

Территори пайĕн пуçлăхĕ Людмила Иванова старостăн ĕçне лайăх хак пачĕ. Тĕрĕссипе, старостăсене сылтăм алă темелле. Халăх нушине, чун ыратăвне пĕлсех тăраççĕ. Яваплă пулнăран хастарсене кирек мĕнле ĕçе те шанма пулать. Владимир Ржанов ял-йыша паха тĕслĕх кăтартать. Ăна никам та сывлăх сунмасăр иртмест. Общество ĕçĕнче яваплă, пуçаруллă та правур, авторитетлă çынпа ентешĕсем тивĕçлипе мăнаçланаççĕ.

Акă, нумаях пулмасть вăл Кӳлхĕрринче иртнĕ сусăрсен обществин мероприятине йĕркелеме пулăшрĕ.

– Ир-ирех тăтăм та пулă тытма васкарăм. Ара, мероприятие хутшăнакансене техĕмлĕ шӳрпепе хăналамалла-çке, – пĕлтерчĕ Владимир Иванович. – Кунĕ ăнăçлă пулчĕ. Çанталăкĕ ăшă та тӳлек. Кимĕ çине лартăм та пулă лайăх кĕрекен вырăна çитрĕм. Тӳрех пысăк пулă – толстолобик – çакланчĕ. Ăна чăвашла хуран пулли теççĕ.

Староста ял хастарĕсем пулăшнипе техĕмлĕ пулă шӳрпи пĕçерчĕ. Таврана ырă шăршă сарăлсан ялти ватăвĕтĕ те кӳлĕ хĕррине пухăнчĕ. Инвалидсен обществин вырăнти уйрăмĕн председателĕ Людмила Николаева ĕçчен те тăрăшуллă Владимир Ивановича чун-чĕререн тав турĕ, малалла та тарават, ăшпиллĕ, çирĕп сывлăхлă пулма сунчĕ. Çавăн пекех ыр сăмахсене ял хастарĕсем те тивĕçрĕç.

Владимир Ржанов пĕчĕкренех пулла çӳреме юратать. Вăл тăван ялта Чăваш енри чи пысăк та çутă кӳлĕ пурришĕн савăнать. Пулăçăсен конкурсне хутшăнма кăмăллать. Калас пулать, пулла ăманпа, кукурузăпа, урпа кĕрпипе илĕртсе тытать.

Владимир Иванович яш чухне Сергачри çул дистанцийĕнче бригадирта ĕçленĕ. Пулас мăшăрĕпе Рязань облаçĕнчи техникумра вĕреннĕ чухне паллашнă. 1989 çулта çемье çавăрнă. Арăмĕ Замирахон Иномжановна Узбекистанра çуралса ӳснĕ. Чăваш каччипе узбек хĕрĕ çирĕп çемье чăмăртанă. Ржановсем виçĕ ачана кун çути парнеленĕ. Халĕ вĕсен 7 мăнук çитĕнет.

– Ача-пăча пӳрт тултарать, теççĕ те. Мăнуксем килсен мăшăрăмпа питĕ хĕпĕртетпĕр. Вĕсемпе тĕрлĕ вăйăсем вылятпăр, пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарма тăрăшатпăр, – ăшшăн калаçрĕ кил хуçи.

Владимир Ржанов çамрăк ăрăва йăх-несĕллĕхпе паллаштарма тăрăшать, мăнукĕсем пысăк тĕрев пуласса шанать.

Ржановсен кил хуçалăхĕ çирĕп. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх тытаççĕ. Лашасем те усраççĕ. Владимир Ивановичпа Замирахон Иномжановна ачисене те, мăнукĕсене те ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

Кил хуçин ку эрнере сумлă юбилей. Чунпа хăйне яланах çамрăк туять вăл, пурнăçри йывăрлăхсем умĕнче нихăçан та пуç усмасть. Владимир Иванович çуралнă куна пысăк йышпа пуян кĕрекере паллă тума ĕмĕтленет.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Çĕнĕрен шутласа параççĕ




**Ку уйăхран регионти ĕçлекен пенсионерсем ӳстернĕ пенси илеççĕ. Раççей Социаллă фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ 2024 çулта ĕçленĕ 76 пин ытла çыннăн страхлав пенсийĕсене августăн 1-мĕшĕнчен çĕнĕрен шутласа парассине пĕлтерет. Çакна валли гражданСЕН заявлени çырмалла мар.**

Тӳлевсен тӳрлетĕвĕ, пĕлтĕр работодательсем страхлав взносĕне хывнă пулсан, страхлав пенсине илсе тăракансене пурне те пырса тивет. Ватлăхпа, инвалидноçпе паракан тата, енчен те шута илмен взноссем пур-тăк, тăрантаракансăр юлнипе тивĕçекен страхлав пенсийĕсем ӳсĕç.

– Ĕçлекен кашни пенсионерăн пенсине çĕнĕрен уйрăммăн шутласа парĕç. Хушăм сумми официаллă шалу виçинчен тата пĕлтĕр ĕçлесе татнă уйăхсен хисепĕнчен килет. Ку кăтартусем мĕн чухлĕ нумайрах, пенси çавăн чухлĕ ытларах хушăнать. Ӳснĕ виçене августра графикпе килĕшӳллĕн пенсипе пĕрле куçарса параççĕ, – ăнлантарать Социаллă фондăн Чăваш енри уйрăмĕн управляющийĕ Валерий Николаев.

Хушăмăн чи пысăк виçи – 3 уйрăм пенси коэффициенчĕ чухлĕ. Ун «хакĕ» гражданин хăш çулта пенси йĕркеленинчен е ĕçрен кайнă хыççăн тепĕр хут хăçан тимлеме тытăннинчен килет.

2025 çултан Социаллă фондăн Чăваш енри уйрăмĕ ĕçлекен мĕнпур пенсионерсен пенсине çĕнĕрен индексацилеме тытăнни çинчен аса илтерет. Тӳлевсен ӳсĕмĕ ĕçлемен пенсионерсем пекех, унчченхи çулхи инфляци кăтартăвне шута илсе пурнăçланса пырать.

Пĕтĕм тулли информаци – Социаллă фондăн республикăри уйрăмĕн социаллă сетьсенчи официаллă аккаунчĕсенче. Çавăн пекех «вĕри линин» 8(800)100-00-01 номерĕпе шăнкăравласа ыйтма пулать.